# Аслă Çĕнтерӳ – савăнăç, ирĕклĕх тата ырăлăх символĕ

















(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

сем çак истори чĕррĕн çыракан-ĕсем. Паян эпир вĕсем çине тав туса, мухтанса пăхатпăр. Шел пулин те, çак сак çулран çул пушанса пырать. Нумай ялта вĕсем пачах çук. Алексей Максимович Максимов акă Мăньял Хапăсра вăрçă участникĕсенчен пĕчченех тăрса юлнă. «Çак вăрçă этем историйĕнче юлашки пултăр, ун синкерлĕхне урăх никам та ан пĕлтĕр!» – терĕ хăюллă танкист хăйсене валли чаплă уяв йĕркелесе панишĕн чĕререн савăннине пĕлтерсе. Пичĕ çинче пăчăртаннă куççульне те сисмерĕ вăл, чечексемпе, тĕрлĕ тĕслĕ хăмпăсемпе, транспарантсемпе илемлетнĕ колоннăсем çине тав туса пăхса.

Кĕçех паттăрсен ăрăвĕ шкул ачисем парнеленĕ чĕрĕ чечексен ытамне путрĕ. Асăну паркĕнчи монумент умне гирляндăсемпе чечек кăшăлĕсемпе пĕрле Чăваш ен Президенчĕ Михаил Игнатьев ячĕпе чечек карçинкки вырнаçрĕ.

Иртнĕ çултанпа ырă йăлана кĕртнĕ музыкăпа хореографи композицийĕ кăçал та тыткăнларĕ. «Химик» спорт клубĕн стэп-аэробика ушкăнĕн чĕрлĕх кĕртекен спорт ташши, шкул ачисен, культура ĕçченĕсен площадьре сарăлнă çаврăмĕсем мирлĕ пурнăç савăнăçне сăнларĕç. Уяв парадне яланхиллех çĕршывăн пулас хӳтĕлевçисем – Калининăри вăтам шкулти, Вăрнарти 29-мĕш училищĕри тата ял хуçалăх техникумĕн кадечĕсем, «Патриот» çарпа патриотизм клубĕн членĕсем – ура-уран утса уçрĕç, автомашинăсен колонни çар пулăмĕсен историне аса илтерчĕ. Районти чи ăста учительсен, маттур спортсменсен, предприяти-организацисен илемлетнĕ колоннисем трибуна умĕпе «Ура!» кăшкăрса иртсе чукун çул вокзалĕ çывăхĕнчи Çĕнтерӳ площадьне çул тытрĕç. Парад вĕçĕнче – вăрçă участникĕсем, ветерансемпе тыл ĕçченĕсем, алран-алă тытăнса вăрçă юррисене шăрантарчĕç. Çак савăнăç районти культурăпа кану паркĕнче тăсăлнă уявра та сӳнмерĕ. Кунта «уйри кухня» ĕçлерĕ. Мухтава тивĕçлĕ ăру салтак пăттине çинипе пĕрле 100-шер грамм «фронтовой» тутанчĕ çеç мар, çамрăклăха аса илсе хăйсен вăхăтĕнчи юрăсене аякка юхтарчĕ, çăмăлрах кĕлеткеллисем ташласа та илчĕç. Пĕри те тепри пырса çупăрларĕ-ыталарĕ вĕсене, алă тытрĕ, пуç тайса саламларĕ.

66-мĕш хут паллă турăмăр Аслă Çĕнтерĕвĕн уявне. Асăну скверĕнчи Салтакпа Амăшĕн палăкĕ, салтаксен тăванла вил тăприйĕ, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пуç хунисене асăнса лартнă чукун çул вокзалĕ умĕнчи палăк умне выртнă чĕрĕ чечексем, чечек кăшăлĕсем Çĕнтерӳ чапĕ çулсем хушши вилĕмсĕр çулăмла ялкăшнине çирĕплетрĕç...

Светлана
ЧИКМЯКОВА.
*Сăн ӳкерчĕкĕсем авторăн.*

---

Çĕрпелти вăтам шкулта Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче вилнĕ ентешсене асăнса лартнă обелиска вĕренекенсем пăхса-асăрхаса тăраççĕ. Çĕнтерӳ кунĕ тĕлне ун территорине тасатса тирпейлерĕç. Кунашкал обелиск Чăваш Республикинче пĕрре. Ăна Анатолий Брындин скульпторпа Анатолий Иванов монументалист-художник проекчĕпе туса лартнă. Мрамор плитасем çине Аслă вăрçă хирĕнче пуç хунă 224 ентешĕн хушамачĕсене çырнă. Асăрхаса-тирпейлесе тăраççĕ. Кашни çулах клумбăсем çинче чечексем лартса ӳстереççĕ, мрамор плитасене çуса-тасатса тăраççĕ. Çак ĕçе Л.Н.Кузнецова аслă вожатăйпа директорăн вĕрентӳпе воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ Л.В.Феофанова йĕркелесе пыраççĕ.

Н.ИГНАТЬЕВА.

Аслă Çĕнтерӳ кунне халалланă уяв Калинино салинче шăмат кун мăнаçлăн иртрĕ: капăрлатнă тĕп площаде çынсем чылайăн пухăнчĕç, вăрçă çулĕсенчи юрăсем чуна тыткăнларĕç... Чи сумлă хăнасем – Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин участникĕсемпе ветеранĕсем, вăрçăра пуçĕсене хунă е каярахпа вилнĕ салтаксен арăмĕсем.

10 сехет тĕлне Калининăри вăтам шкулта тата шкул-интернатра вĕренекенсем пысăк колоннăпа тĕп площаде тухрĕç. Парада Вăрнар тата Йĕпреç районĕсен çар комиссарĕ В.Венедиктов йышăнчĕ, пурне те кашни ăрушăн чи хаклă уявпа саламласа ветерансене çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул сунчĕ. Çĕнтерӳçĕ-салтаксене, вĕсен тăлăх арăмĕсене Калинино ял поселенийĕн пуçлăхĕ Л.Иванова, район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ Н.Иванов, А.Григорьев полковник, вăтам шкулăн тата шкул-интернатăн директорĕсем Т.Ефимовăпа А.Шоколева тата ыттисем саламларĕç. Калининăри чиркӳ настоятелĕ Сергий атте ветерансене яланах сывлăхлă пулма пиллерĕ. Ачасем ватăсене вĕсен паттăрлăхĕшĕн, паянхи тăнăç пурнăçшăн тав туса юрă-ташăпа саламласа савăнтарчĕç. Мăнукĕсем маттур, çĕршывăн чăн-чăн хӳтĕлевçисем пулса ӳснипе мухтаннине пытармарĕç ветерансем.

Парад шкул ачисен – кадетсен, гусарсен, пограничниксемпе юнгăсен, космонавтсемпе спецназовецсен – маршĕпе вĕçленчĕ.

И.ЯКОВЛЕВА.

# Асăрханулла пулăр

## АСРА ТЫТМА

Ӳсен-тăрансене им-çамламасăр пахчаçăсем, сад ăстисем лайăх тухăç илеймеççĕ. Анчах та рынокра суя пестицидсемпе агрохимикатсене сутнине те тупса палăртнă. Хушма хуçалăхра «Сульфат аммоний», «Селитра аммиачная марка Б», «Карбамид (мочевина)», «Диаммоний фосфат», «Алатар, КЭ» препаратсемпе усă курмалла мар.

Пахчаçăсемпе сад ăстисен çак ансат правилăсене яланах асра тытмалла:

– препаратсене паллă суту-илӳ фирмисенчен туянмалла;

– Раççей Федерацийĕнче усă курма ирĕк панă пестицидсемпе агрохимикатсен патшалăх каталогне кĕртнĕ препаратсене илмелле;

– иккĕленӳ пулсан сутуçăран пестицид е агрохимикат патшалăх регистрацийĕ витĕр тухнине ĕнентерекен свидетельство копине ыйтмалла;

– препаратсен чĕркемне тимлĕ сăнăр, ӳсен-тăрансене хӳтĕлемелли имçампа усă курмалли вăхăчĕ хăçан тухнине тĕрĕслĕр, инструкци ыйтма ан манăр.

Препаратсен пахалăхĕ иккĕлентерет пулсан Раççей ял хуçалăх асăрхавĕн республикăри управленине пĕлтерĕр. **Адресĕ: Шупашкар, Крупская урамĕ, 9-мĕш çурт. Т.52-80-33. Тепĕр адресĕ: Шупашкар, Ярославски урамĕ, 76-мĕш çурт. Т.: 62-13-22, 62-56-03.** Çыру яма кăмăл тусан пĕрле чек тата пестицидăн, агрохимикатăн чĕркемне хума ан манăр.

**В.НОВОСЕЛЬЦЕВ,**
**пестицидсемпе агрохимикатсене сутассине асăрхаса тăракан тата вăрлăх тĕрĕслекен пайăн патшалăх аслă инспекторĕ.**

# Çĕр улми чирĕ çинчен



**Нематода – çавракa ăмансен пĕр тĕсĕ, ытларах чухне çĕр улмине нумай çул пĕр вырăнта лартса тăвакан анасем çинче ĕрчет, тымара лексе çак культурăна чирлеттерет. Чир ернĕ ӳсен-тăран кая юлса аталанать, унăн тунисем çӳхерех, вăрăмрах пулаççĕ, çулçисем ир сарăхаççĕ. Хыççăн пĕтĕмпех çавăрса илет. Ӳсен-тăран тымарĕ айванланать, тимлĕрех сăнаса пăхсан унта мăкăнь вăрринчен пысăках мар, сарă е хăмăртарах тĕслĕ нематодăн цистисене асăрхама пулать, кашнинче – 1400 яхăн вĕтĕ хуртсем. Вĕсем çĕр-тăпрара хĕллехи çанталăкра та упранса юлаççĕ, çуркунне çĕр ăшăнсан тепĕр хут çĕр улми тымарне лекеççĕ.**

Республикăра тĕпчевсем ирттерсе çĕр улмин нематодипе сиенленнĕ лаптăксене тупса палăртнă. Раççей Федерацийĕн «Ӳсен-тăрансен карантинĕ çинчен» саккунĕн 6-мĕш статйипе, Раççей Федерациийĕн ял хуçалăх министерствин хушăвĕпе килĕшӳллĕн федерацин ветеринари тата фитосанитари управленийĕн Чăваш Республикинчи службипилĕк районти хушма хуçалăхсен территорийĕсене ял тăрăхĕсем тăрăх карантинлă фитосанитари зони тесе йышăннă. Вĕсем шутне Вăрнар районĕнчи çак ялсем те кĕреççĕ: Çĕн Мĕлĕш, Кив Мĕлĕш, Çĕн Хирпуç, Санарпуç, Çĕньял Хапăс, Хурăнсур Çармăс, Кайри Тукай, Çĕрпел, Аçăмçырми, Шĕнер Ишек, Енĕш, Вăрман Кипек, Кӳстӳмĕр, Хапăс, Упнер, Катăш, Вăрманкас, Мăньял Хапăс, Туçи Мăрат, Çавалкас, Хирпуç, Малтикас Ялтăра, Кив Сăрьел.

Ку тăрăхри ял çыннисен çĕр улми вăрлăхне, çавăн пекех çимеллине те ялтан илсе тухса сутмалла мар. Çӳлерех асăннă ялсене пĕрлештерекен ял тăрăхĕсен администрацийĕсен çак продукцие сутма кайма справкăсем пама юрамасть. Тавара вырнаçтарас текенсен малтанах çĕр улми партине нематодăран тĕрĕслеттермелле, карантин сертификачĕ илмелле.

Нематода чирĕпе кĕрешме питĕ йывăр, çавăнпа та чирлĕ çĕр лаптăкĕсенче 7–8 çул хушши çĕр улми лартмалла мар, унта нумай çул ӳсекен курăксене е пĕрчĕллĕ тырă культурисене çитĕнтермелле, пусă çаврăнăшне пăхăнмалла.

Пахчаран пахчана куçнă чух ĕç хатĕрĕсене тĕплĕн тасатăр, тăпрана азот удобренийĕсемпе апатлантарăр. Нематодăна парăнман çĕр улми сорчĕсемпе усă курмалла. Вĕсем: «Роко», «Импала», «Жуковский ранний», «Розара», «Ред Скарлетт», «Лазурит», «Пушкинец» тата ытти те.

Ыйтусем пулсан **2-74-02** телефонпа шăнкăравлăр. Пирĕн адрес: **Вăрнар поселокĕ, Ж.Илюкин урамĕ, 2-мĕш çурт.**

**А.ПЕТРОВ,**
**Раççей ял хуçалăх асăрхавĕн республикăри управленийĕн патшалăх аслă инспекторĕ.**

# Юлташне çаратнă

**Элмен Сунарта пурăнакан вун çиччĕри Н.Баранов Шупашкарта 23-мĕш професси училищинче пĕлӳ пухма тытăннă. Кунта ытти çамрăксемпе паллашнă, çĕнĕ тус-юлташсем тупнă.**

## СУД ТЕНКЕЛĔ ÇИНЧЕ

Вĕсенчен пĕрне – Шупашкарта пурăнакан А.Иванова – вăл асламăшĕ патне Элмен Сунара хăнана чĕннĕ. Çапла декабрĕн 18-мĕшĕнче иккĕшĕ 17 сехет тĕлнелле Вăрнарта пулнă. Кирлĕ пулĕ тесе А.Иванов банкоматран укçа илнĕ, юлташĕ вара унăн банк карттин пин-кодне лайăх ас туса юлнă. Çавăн чухнех тусĕн укçине вăрлас шухăш çуралнă ĕнтĕ унăн пуçĕнче.

Кĕçех вĕсем таксипе яла вĕçтерсе çитнĕ. Мĕнле чăтăмсăррăн кĕтнĕ пулĕ тусĕ çывăрса каясса... Çурçĕр тĕлнелле лешĕ чăнах та çывăрнине тĕрĕслесе ĕненнĕ те, унăн куртка кĕсйинчен пластик карттăна туртса кăларнă. Тӳрех килтен тухса утнă, çула май машинăпа Вăрнара ларса кайнă. Поселокра, паллă ĕнтĕ, банкомат патне васканă, юлташĕнне пĕтĕмпе 14500 тенкĕ илнĕ. Халĕ укçа пур, вĕçкĕнленме юрать тенĕ ĕнтĕ, киревсĕр ĕçе тунă хыççăн çамрăк яла таксипе таврăннă. Пластик карттăна кĕсьене каялла чикнĕ те шăпăрттăн çывăрма кĕрсе выртнă. Тепĕр кунне тусне куçран пăхма мĕнле хăюлăх çитернĕ-ши, анчах чип-чиперех пĕрле Шупашкара таврăннă, укçине те вăтанмасăрах тăккаланă.

А.Иванов вара хăйĕн укçи сахалланнине тепĕр 10 кунран кăна сиснĕ. 14500 тенкĕ çухални çамрăка, паллах, кулянтарнă. Тăлăх ӳснĕскерĕн, пластик картта çине компенсаци тӳлевĕсем тата стипенди пухăнса пынă.

Вăрнар район сучĕ Н.Баранова ку преступленилле ĕçшĕн айăпласа 3000 тенкĕ штраф тӳлеттерме йышăннă.

**А.ШАШКАРОВ,**
**шалти ĕçсен Вăрнар районĕнчи пайĕ çумĕнчи следстви уйрăмĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçласа пыраканĕ.**

# Çĕçĕпе чикнĕ

**Ĕçкĕ халиччен никама та ырă туман-ха. Ун витĕмĕпе пулнă киревсĕр ĕçсем вара тем чухлех. Ку канмалли кунсенче акă Пăртасри пĕр килте ĕçкĕ вăхăтĕнчи хирĕçӳ инкекпе вĕçленнĕ. Преступлени тунă тесе шутлакан çынна тытса чарнă, Çĕмĕрлери районсем хушшинчи следстви пайĕ РФ Уголовлă Кодексĕн 105-мĕш статйин 1-мĕш пайĕпе уголовлă ĕç пуçарнă.**

## ТИСКЕРЛĔХ

Тискер киревсĕр ĕç май уйăхĕн 8-мĕшĕнче каçхине К.-сен кил картинче пулса иртнĕ. Малтанхи следстви кăтартăвĕсем çинчен РФ Следстви Комитечĕн ЧР Следстви управленийĕн районсем хушшинчи Çĕмĕрлери следстви пайĕн следователĕ Александр Спиридонов каласа парĕ:

«Вырсарни кун каçхине çак киле тăванĕсем – А.-сем – хăнана пынă, пĕрле эрех ĕçкеленĕ. К.-сем патĕнче пурăнакан арçынна (43-ри С.-на) А. унччен те килĕштермен, иккĕшĕ тĕл пулсан яланах хирĕçкеленĕ теççĕ. Хальхинче те вĕсем тем пайлайман, А. ăна хĕнеме тытăннă, темиçе хутчен çапнă. С. вара ăна... çĕçĕпе мăйран чикнĕ. Васкавлă пулăшу та çăлса хăварайман арçынна, вăл çул çинче вилсе кайнă.

Хăй мĕн тунине ăнланса илнĕ С. преступлени вырăнĕнчен тарса çухалнă. Арçынна тепĕр кунне 9 сехет иртсен йĕрке хуралçисем тытса чарнă.

С. ниçта та ĕçлемест, ăна пурăнакан вырăнта япăх хак параççĕ. Вăл йывăр преступлени тунине, малтанхи следстви органĕсенчен тата судран тарса çухалма, свидетельсене витĕм кӳме пултарассине шута илсе, ăна следстви ĕçĕсем вăхăтĕнче ирĕкрен хăтарма палăртнă.

**И.СЕРГЕЕВА.**

## ЛИРИКĂЛЛĂ ПОВЕСТЬ

**Владислав ПАСТУХОВ-АНАТКАС**

# Ан хурлан, шурă хурăнăм ...



*(Малалли. Пуçл. 42-43, 47– 52-мĕш номерсенче)*

–Э–э–э! Çывăрма вырттарас умĕн анне сана салтăнтарма пуçларĕ те, эсĕ вара, юратнă аттеçĕм: «Ан çулăх мана, эпĕ авланнă, ман арăм Гальă!»– тесе турткалашма, çухăрашма пуçларăн. Майкупа шăлаварна та хывтармарăн... Рингри боксер пекех аннепе кĕрешрĕн-çапăçрăн! Анне, пирĕн анне суккăр мар вĕт..! Юрату суккăр тесе калаççĕ пулсан та... Пĕлет вăл, ӳсĕрпе те эсĕ ăна никампа та улăштарманнине! Хĕрарăмшăн ку чи пахи-таси!.. Çитменнине тата çĕрĕпех «Гальă, ман Гальă!» тесе чĕнсе-кăшкăрса выртрăн вĕт ăна... Кӳршĕ хĕрарăмĕсем: те кĕвĕçсе, те тарăхса ... стенасене шаккарĕç пулсан та, çывăрса кайсан та, тĕлĕкре те «Гальă» тесе кашкăрма ирччен те чарăнмарăн-çке!?

«Вăт-тăк, кулăш-тăк кулăш»,– шутларĕ Серегин хăйне хăй вăй-хăват парас шухăшпах. Кăмăлне çирĕплетсе каларĕ вара ăшĕнче: «Чăннипех, тĕнчере тĕрлĕрен кĕнчеле иккен, Генăпа Вовка çинчен кăна мар, Сергей ятлă çынсем çинчен те çуралма пуçларĕç иккен анекдотсем, хăй вăхăтĕнче Чапайпа Петька çинчен янранă пек... Апла анекдотсенче те чăнлăх пур, ăна ăнланма-курма çеç пĕлмелле... Нумай чух вĕт, пирĕн пурнăç пĕр-пĕр анекдота аса илтерет мар-и? Тепĕр тесен... Тĕнче кулăшсăр кичем пулĕччĕ. Пурнăçăн, çут çанталăкăн хăйĕн вăрттăнлăхĕсем пур. Çынна, уйрăмах йывăрлăхра, кулăш та хавхалантарма пултарать, хăшнепĕрне сăвăпа-юрăпа савăнтарнă пек. Е каччă хĕре чечек парнелесе юратнă пек!..»

* * *

Килне çитсен арăмĕпе амăшĕ ăмăртмалла тенĕ пек Сергее ăс-тăн пама пуçланăччĕ каллех.

Пĕлет-ха, ăнланать-ха Серегин: «Мĕнпе уйăрăлса тănине ăс-тăнпа. Тăнлă çын йывăрлăхсенчен çăлăнса тухма ялан çул-йĕр шырать-çке. Ăсли вара ун пек йывăрлăха нихăçан та кĕрсе ӳкмест».

Арăмĕ: «Ялан мана калаттăн: арçынпа ан тавлаш, шăпăрт пулсан, шăпчăк пулăн,–тесе. –Кăтартатăп малашне шăпчăк чĕмсĕрлĕхне... Илтнĕ-и эсĕ рак ăçта хĕл каçнине! – сассине çав тери хăпартса тата хăратса янăранăччĕ Сильва. Çӳре тата асфальт тăрăх Качака Мишши пек унталла-кунталла уткаласа, пĕр пăраххутпа Атăл тăрăх лартса ямалласкерсем, тĕнче кулăшĕсем!»

Пăянамăшĕ: «Ăна виçĕ пуслăх ăсĕшĕн, аялти «ытарайманлăхшăн» мухтаса тăмалла мар-и тата?.. Пĕр пăта çапма пĕлмен арçынна, тен, милици умĕнче чаплăлантарса кăмăлне çĕклемелле марччĕ-и тата?.. Анкă-минкĕ эс!..

Арман шапи... Армути йӳçекки эс...»

Çакăн пек ӳпкеве чăтаймасăр, Сергей хăйне вĕрентекен хĕрарăмсене çапла калама пăхнăччĕ: «Арçын, кушак аçи евĕр, хăйпе çепĕç пулнине юратать...Таса вырăн сарса панине те кăмăллать вăл». Хĕрарăмсем, çакна илтсен, пĕрпĕринпе ăмăртмалла кăшкăрса янăччĕ:

«Чуп тумалла мар-и тата пирĕн кутунтан сана?.. Тутлă апат пĕçерсе çитермелле мар-и ресторанри поварсем пек? Шăлаварна стрелкăллă утюгласа якатса памалла мар-и Çитăр Кули арăмĕ пек? Пушмакна кремлесе çутатса тăмалла мар-и писатĕлĕн арăмĕ пек?» Мар çине, мар-и!.. Унтан каллех çак пĕр юрă: «ирхи тăмсай», «йывăç мĕлки», «кăмпа тункати...» Чăн та, хĕрарăмĕсем «илемлĕ те чаплă» сăмаххисемшĕн пĕртте кĕсьене кĕмеççĕ мар-и?

...Сергей текех вĕсене хирĕç нимĕн те чĕнменччĕ-шарламанччĕ. Çăварне шыв сыпнă пекех пулнăччĕ. Ăçтан унта, пурăнан пурнăçра пĕр хĕрарăма çĕнтерейместĕн те, икке çĕнтерме ан та ĕмĕтлен-çунатлан!.. «Пуш чун-чĕреллĕ хĕрарăмсене калани усси çук»,– тесе салхуллăн шутланнăччĕ вăл.

Пĕлет Серегин, çак хваттерте хăй мĕншĕн кирлĕ мар пулса тăнине те. Тата питĕ тĕлĕннĕччĕ вăл вĕсен сăмах «пуянлăхĕнчен!» Ăçтан тупаççĕ-ха пирĕн хĕрарăмсем çавнашкал чăваш сăмахĕсене... Сăмахĕсем ытла тутлă пулнипе, чĕлхене çăтса ямании çеç... Пуян-çке пирĕн чăваш чĕлхи кунта та, кулленхи арăш-пирĕшре те, илемлĕ поэзипе прозăра кăна мар!..

* * *

Сергей Петрович Серегин ăста шоферччĕ. Ячĕ-сумĕ те пурччĕ. Медале те тивĕçнĕччĕ. Хисеп грамотисем те пĕр альбома кĕместчĕç. Арăмĕ хваттерĕнче грамотăсен кĕтесне те тунăччĕ. Анчах та виçĕ çул каялла йывăр аварие лекрĕ вăл. Вара ăна судпа айăпларĕç. Уголовнăй йĕркепе. Чăн та, условно анчах. Аварие лекнĕ çĕмрĕк автомашинăшăн çĕр çирĕм пин тенкĕ тӳлеттерме йышăнчĕ ăна суд. Ку вара Сергей Серегиншăн йывăртан йывăртарах ыйту пулса тăчĕ... Серегин, хăйĕн айĕпне курмарĕ пулин те, çак аварире суд йышăнăвне хирĕçлемерĕ. Йăваш çын пулнăран мар.

*(Малалли пулать)*

